Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

24 (7449) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи мартăн (пуш) 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

## Ыйтусем пур пулсан, малаллах пăхатпăр

Иртнĕ юн кун республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Хальхинче те информаци ушкăнĕсем халăхпа тĕл пулнă чух ЧР Президенчĕ ЧР Патшалăх Канашне янă Çырăва сӳтсе яврĕç. Çавăн пекех республикăн социаллă-экономика тĕлĕшĕнчи задачисем тавра калаçрĕç.

Пирĕн района çак кун ЧР Патшалăх ветеринари службин ертӳçи В. К. Тихонов, ЧР Вĕрентӳ, çамрăксен политикин министрĕн çумĕ М. Ю. Толстов, РФ ПФ Чăваш Республикинчи уйрăмĕ” патшалăх учреждени управляющийĕн çумĕ А. П. Иванов, “Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕ” патшалăх учреждени ертӳçи Л. П. Морозов килчĕç. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю. А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Унтан 4 ушкăна пайланса, вырăнсене çитсе ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç.

“Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕ” патшалăх учрежденин ертӳçи Л. П. Морозов ертсе пыракан ушкăн хальхинче Çатракасси тăрăхне çитрĕ. Чи малтанах вĕсем Очăкассинчи куллен кирлĕ таварсене сутакан магазинта пулчĕç. Асăннă магазина кăçал юсама палăртнă. Хăйсене хумхантаракан тĕслĕхсем çинчен ыйтсан, сутуçă çапла каларĕ:

-Чи кирли – халăха ĕç кирлĕ. Ĕçлесен укçа та пулать, пирĕн те тавар каять,- терĕ вăл. – Халĕ арçынсем Мускава çӳреме пуçларĕç те пирĕн тавар выртсах тăмасть. Малтан япала пач кайман вăхăтсем те пулнă.

Магазина килнисенчен пĕри вара çапла сĕнӳ пачĕ:

– Раççей Пĕтĕм тĕнчери сутуилӳ организацине кĕни пирĕн района хăш енчен те пулин пырса тивет-и? Халĕ Муркаш калаçмасть ĕнтĕ. Çак ыйту тавра район хаçатĕнче “Çавра сĕтел” йĕркелесен вырăнлă пулмалла, - терĕ вăл.

Ун хыççăн информаци ушкăнĕ Очăкасси клубĕнче, кунти библиотекăра пулчĕ. Палăртмалла, май уйăхĕнче ял библиотеки тĕслĕх библиотека пулса тăмалла. Халĕ унта хатĕрленӳ ĕçĕсем пыраççĕ. Р.С. Илларионова библиотекарь палăртнă тăрăх, кунта çӳрекенсен йышĕ ӳссех пырать. Пенсионерсем те килсех тăраççĕ. Вĕсем хăйсем çырăннă хаçатжурнала вуласа тухнă хыççăн библиотекăна илсе килсе пани те питĕ савăнтарать Римма Семеновнана. Очăкассисем моделлĕ библиотекăна уçнă чух кунта вулав çурчĕ уçăлнăранпа шăп 70 çул çитнтине те паллă туса ирттерме палăртаççĕ.

К.Иванов ячĕллĕ хуçалăх ертӳçипе тĕл пулсан, сăмах çур аки тавра пулчĕ. Асăннă хуçалăх, çăмăлах мар лару-тăрура пулсан та, малаллах пăхать. П.А. Толикин хатĕрленӳ ĕçĕсем епле пынипе паллаштарчĕ.

Ун хыççăн Пĕрлехи информаци кунне хутшăнакансем Çатракасси шкулĕнче пулчĕç. Кунти лару-тăрупа паллашрĕç. Çатракассисене шкул çивиттийĕ юхни, кунта тĕслĕх библиотека кирли çинчен шутлани курăнчĕ. Вунпĕрмĕш классемпе иртнĕ тĕл пулура сăмах профориентаци темипе пулчĕ.

Информаци ушкăнĕ малтан ку тăрăхра хускатнă ыйтусем епле пурнăçланнипе те кăсăкланчĕ. Муркаша ĕçе çӳрекенсене Муркашран Çатракассине 16 сехет хыççăн автобус рейсĕ кирлĕ пулни те палăрчĕ. Çавăн пекех çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарассипе те ыйтусем чылаях пулчĕç.

Пĕрлехи информаци кунне хутшăннă ытти ушкăнсем Чуманкасси, Ильинка, Юнкă ял тăрăхĕсене çитрĕç. Вăрманкассинчи тĕп, Юнкăри вăтам шкулсенче тата ытти çĕрте пулса халăхпа тĕл пулчĕç. Юлашкинчен Пĕрлехи информаци кунĕнче хускатнă ыйтусене татса памалли çул-йĕре палăртрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

Раççейре

## Май уявĕсем çывхараççĕ

Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе виçĕ кун канатпăр, 9-мĕшĕнче – пĕр кун çеç. Çапла пĕлтернĕ Федераллă ĕçлев комитечĕн управленийĕн ертӳçи Иван Шкловец.

Апрелĕн 28-мĕшĕнче, шăмат кун, апрелĕн 30-мĕшĕ шучĕпе ĕçлемелле пулать. Хыççăн вара умлă-хыçлă канатпăр: апрелĕн 29-мĕшĕнче (вырсарни), апрелĕн 30-мĕшĕнче (тунти), майăн 1-мĕшĕнче (ытлари).

Майăн 9-мĕшĕ кăçал юн куна килет. Çапла вара уяв ячĕпе эрне варринче пĕр кун çеç канма тивет. Мартăн 8-мĕшĕнче кăçал çапла пĕр кун кантăмăр.

Уяв умĕнхи ĕç кунĕсем пĕр сехет кĕскерех.

Акци

## ЧР шалти ĕçсен министрне В.В. Антонова ыйту парăр

Республикăра “Ыйту парăр министра” акци иртет. Ку хутĕнче вулакансен ыйтăвĕсене шалти ĕçсен министрĕ В.В. Антонов хуравлать.

Ыйтусене тунти кунран юлмасăр районти шалти ĕçсен пайне е редакцие çитермелле. Ыйтусене çак телефонсемпе те йышăнаççĕ: 2-11-59 (районти шалти ĕçсен пайĕ), 2-11-36 (райхаçат редакцийĕ).

Ыйтусен хуравĕсене район хаçатĕнче пичетлетпĕр.

**Районти шалти ĕçсен пайĕ.**
**Райхаçат редакцийĕ.**

Шупашкар ГЭСĕн шывне хăпартасси пирки

## Халăх интересне шута илеççĕ

Иртнĕ ытлари кун ЧР Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерстви ыйтнипе район администрацийĕн ларусен залĕнче “Шупашкар гидроузелне туса пĕтерессин инвестицине сăлтавлассине” халăхпа итлесе сӳтсе яврĕç. Унта депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе депутачĕсем, общественность представителĕсем, район активĕ хутшăнчĕ. Асăннă мероприятие пуçараканĕ – Самарăри “Инженерный центр Энергетики Поволжья” акционерсен уçă обществи.

Малтанах çакна асăнмалла. Паянхи кунччен Шупашкарти гидроузел туса пĕтерменнипех ĕçлет. 25 çул ытла ĕнтĕ 63 метр чухлĕ паллă çинче çирĕп мар режимпа ĕçлет. Инженери тĕлĕшĕнчен хӳтлĕх паракан 19 объектран нихăшне те туса пĕтермен. Шыв хранилищине туса пĕтерме укçа уйăрасси те чарăннă. Çапла майпа Атăл çинче Чулхулапа Шупашкар ГЭСĕсен шлюзĕсем хушшинче тарăн шыв çулĕ туса хурас задача пурнăçа кĕмесĕрех чарăнса ларнă.

Хăпартмалла-и, хăпартмалла мар-и Шупашкарти шыв хранилищине? Çак тĕп ыйтупа çыхăнтарса калаçрĕç те ĕнтĕ пухăннисем. Мĕншĕн ку ыйтăва пирĕн районта сӳтсе яваççĕ? Çак ыйту сиксе тухрĕ пулĕ-ха хăшĕн-пĕрин. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов асăннă темăна халăхпа сӳтсе явнă чух палăртни кунта шăпах хурав вырăнне пулмалла. Шупашкарти шыв хранилищине хăпартни пирĕн районти Ильинка, Катькас тата Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсен территорине тӳрремĕнех пырса тивет. Шăп унти хăш-пĕр лаптăксем шыв айне юлма пултараççĕ.

Шыв шайне мĕн чухлĕ хăпартсан пирĕн район мĕн чухлĕ çĕр çухатни пирки калаçиччен маларах Шупашкар гидроузелне туса пĕтерессин тĕллевĕсем çинче чарăнни вырăнлă пулĕ. Ун пирки çӳлерех асăннă обществăн çут çанталăка сыхлассипе ĕçлекен тĕп специалисчĕ М.И. Прошин чарăнчĕ. Çакă шыв çинчи суднăсен çӳрессин хăрушсăрлăхне ӳстерет, инженери тĕлĕшĕнчи хӳтлĕх объекчĕсене шанчăклă ĕçлеттерме май парать, шыв хранилищинчи экологи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва лайăхлатать, шыв пахалăхĕ те ӳсет тата ытти те. Хальлĕхе вара ГЭС пур хăватăн 60 процентчĕпе çеç ĕçлет. Вăл çавăн пекех Шупашкар гидроузелне туса пĕтермелли 4 вариант çинче чарăнчĕ. Чи лайăх варианчĕ сахал тăкакпах нумай проблемăна татса пама май параканнине палăртрĕ.

Проектăн тĕп инженерĕ Н.В. Баканов вара шыв хранилищине 65 метр тата 68 метр паллă таран хăпартсан пирĕн районти мĕн чухлĕ лаптăк шыв айне пулма пултарасси çинче чарăнчĕ. 65 метр паллă таран хăпартсан шыв хранилищине район 15,33 гектар çĕр çухатать. 68 метр паллă таран хăпартсан, 68,23 гектар çĕр шыв айне юлать. Вăл çак çухату пысăках маррине палăртрĕ.Çавăн пекех хăш паллăна çити хăпартсан инвестици миçе тенкĕпе танлашни пирки асăнчĕ. Патшалăх çак ĕçе вĕçлеме укçа-тенкĕ уйăрнă чух вырăнтан тапранманни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов калашле, экологи тата энергетика ыйтăвĕ вара паян çеç мар, ыран та, малашне те пирĕн пурнăçăн уйрăлми пайĕ пулĕ.

Тухса калаçакансенчен депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В.И. Кожанов Шупашкар ГЭСне тунă чух Шупашкартан Ильинкăна çитиччĕнхи 30 километрлă зонăри вăрмансем шыв айне пулни, çавна пулах шывсем тасамарланса симĕсленни пирки пăшăрханнине палăртрĕ. Шупашкарти шыв хранилищине хальхинче хăпартнă чух ку тăрăхра пурăнакансен пурнăç шайне хăпартмалли мерăсене пăхса хăвармалли, çӳлерех асăннă 30 километрлă зонăра çырана çирĕплетмелли, территорие тирпей-хăт кĕртмелли мерăсене пăхмалли пирки каларĕ. Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Б. А. Сапожников та халăх интересне малти вырăна хумаллине палăртрĕ.

Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕн çумĕ Е. В. Юшин ЧР Правительстви Шупашкарти шыв хранилищине 68 метр паллă таран хăпартни вырăнлă пулнине палăртни çинчен каларĕ. Çавăн пекех çакăнта панă сĕнӳсене йăлтах протокола кĕртсе, пĕтĕм ĕçе унта палăртнисене шута илсе пурнăçлассине палăртрĕ. Урăхла мĕнле пултăр-ха? Шупашкар гидроузелне туса пĕтересси хăех шыв хранилищи çывăхĕнчи тăрăхра пурăнакансен пурнăç шайне тата ку тăрăхри экологи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвне лайăхлатма пулăшать те. Çакă халăх хуçалăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшли вара каламасăрах паллă. Пухăннисем пурте шыв хранилищине 68 метр паллă таран хăпартма палăртнипе килĕшнине пĕлтерчĕç.

**Л. ТУКТИНА.**

Ыр кăмăллăх

## Пĕр-пĕрне малалла та пулăшар

**Районта “Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе” ыр кăмăллăх марафонĕ вĕçленчĕ. Хаçатăн иртнĕ кăларăмĕнче палăртнă марафона хутшăннă предприятисемпе организацисен, уйрăм çынсен списокĕ тата камсен ячĕпе вăрăмланчĕ? Ку ыйту çине ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н. П. ПЕТРОВА çапла хуравларĕ:**

– Мартăн 23-мĕшĕ тĕлне ятарлă счет çине 76335 тенкĕ укçа пуçтарăнчĕ. Халь çеç çак сумма çумне тепĕр 1 пин тенкĕ хутшăнчĕ. Район нотариусĕ П. И. Шлаев илсе килчĕ ăна. Предприятисемпе организацисенчен Чуманкасси ял тăрăхĕн администрацийĕ 600 тенкĕ, Уйкас Янасал ял тăрăхĕн администрацийĕ 550 тенкĕ, районти çар ĕç комиссариачĕ 1 пин тенкĕ, “Оринино” хуçалăх 1 пин тенкĕ, Вăрманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул 550 тенкĕ, район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕ 550 тенкĕ, Ярапайкасси ял тăрăхĕн администрацийĕ 550 тенкĕ, ЧР Финанс министерствин Муркаш районĕнчи пайĕ 800 тенкĕ, ЧР куçман объектсен кадастрĕн федераллă управленийĕн районсем хушшинчи 4-мĕш номерлĕ пайĕ 500 тенкĕ, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн администрацийĕ 2050 тенкĕ, районти шалти ĕçсен пайĕ 2100 тенкĕ, “Муркашри 13-мĕш номерлĕ аптека” патшалăх унитарлă предприяти 1200 тенкĕ, “Муркаш пасарĕ” МУП 2520 тенкĕ укçа куçарчĕç.

Ача тумтирне тата ытти япаласене илсе килекенсем вара çак кунсенче, акă, камсем пулчĕç: Чуманкасси ял тăрăхĕ, район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертсе пыракан специалисчĕ Л. Н. Сорокина, “Муркашри тĕп больница” МУЗ терапи уйрăмĕ, Вăрманкассинче пурăнакан 2 ушкăн инваличĕ, ĕç ветеранĕ Т.В. Сорокин, ЧР Финанс министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн пуçлăхĕ В. А. Иванова, А. Г. Николаев ячĕллĕ Калайкассинчи вăтам шкулти “Спринг” отрячĕ, район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э. И. Симакова, “Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн централизациленĕ бухгалтерийĕ” МУ инспекторĕ З.А. Михайлова.

Юлашкинчен çакна каласшăн, ыр кăмăллăх марафонпа ан вĕçлентĕр. Кашни кунах пĕр-пĕринпе тимлĕ пуласчĕ, пĕр-пĕрне вăхăтра пулăшасчĕ.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Çамрăксен ыйтăвĕсемпе

## Комсомол çук, канаш пулать



Çамрăксен ыйтăвĕсемпе тĕплĕнрех ĕçлес тесе районта 24 çынран тăракан, район пуçлăхĕ çирĕплетнĕ координаци канашне йĕркелерĕç. Çакăнта пур отрасльте вăй хуракансене те кĕртнĕ. Канашăн ертӳçи район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, унăн çумĕ район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов. Çакăн пек координаци канашне республикăра та йĕркеленĕ.

Мартăн 16-мĕшĕнче унăн пĕрремĕш ларăвĕ пулчĕ. Ларăва Ю.А. Иванов уçрĕ, вăлах ертсе пычĕ. Координаци канашĕн положенийĕ çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Кун йĕркинчи малаллахи ыйтупа район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн аслă специалисчĕ Г.Г. Быкова тухса калаçрĕ. “Муркаш районĕнчи çамрăксем: 2007-2010 çулсем” программăпа килĕшӳллĕн 2007 çулта пурнăçламалли ĕç планĕпе паллаштарчĕ. Ирттермелли кашни конкурс çинче чарăнчĕ. Вĕсемпе ял тăрăхĕсене паллаштармаллине палăртрĕ. Çавăн пекех район администрацийĕ çумĕнчи çамрăксем енĕпе ĕçлекен ятарлă ушкăн йĕркелесси пирки каларĕ.

Мартăн 19-мĕшĕнче вара районсем хушшинчи координаци канашĕн ларăвĕ пулса иртрĕ. Унта Йĕпреç, Вăрнар, Муркаш, Канаш районĕсенчи, Канаш хулинчи çамрăксем енĕпе ĕçлекен специалистсем тата активистсем хутшăнчĕç. Малалла ĕçлесси пирки тата ытти тĕрлĕ ыйтăва сӳтсе яврĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: координаци канашĕн пĕрремĕш ларăвĕ.**

Йыхрав

## Çурхи пике – 2007

***Çитес эрнере районти Культура çуртĕнче “Çурхи пике – 2007” конкурс пулать. Унăн йĕркипе паллаштарма эпĕ район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн аслă специалистĕнчен Г.Г. БЫКОВАРАН ыйтрăм.***

– “Çурхи пике – 2007” конкурса мартăн 27-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче 10 сехетре ирттерме палăртрăмăр. Заявкăсене тăратма ĕлкĕрейменнисен район администрацийĕн 325-мĕш пӳлĕмне кĕртсе памалла. Конкурса 16-22 çулхи хĕрсем хутшăнма пултараççĕ. Унăн программи анлă та интереслĕ.

Чи малтанах хутшăнакансен 8-10 минут хушши “Тĕнче илемĕ те – хĕрсем” художествăлла номерсенчен йĕркеленĕ визит карточкипе паллаштармалла. “Нарспи çĕршывĕ” эрудитсен конкурсĕнче хамăр несĕлсене аса илмелле пулĕ. Унта чăваш культура йăли-йĕркин историне каласа памалла. Кунта хутшăнас пулсан чăваш костюмĕ кирлĕ. Çавăн пекех ытти конкурссем те пулĕç.

5 çынран тăракан жюри членĕсем сирĕн пĕлĕвĕре тивĕçлипех хаклĕç. Айтăр-ха, хĕрсем, пурте хутшăнар конкурса.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**